Пĕрлехи информаци кунĕнчен

# Нумай ыйту канăç памасть

Иртнĕ юн кун республикăра Пĕрлехи информаци кунĕ пулнă май пирĕн района ЧР куçман пурлăх кадастрĕн Федераллă агенствин ертўçи В.Г. Егоров, ГТРК «Чувашия» телерадиокомпани журналисчĕ М.Н. Мареева, Чăваш патшалăх гуманитари институчĕн ăсчахĕ Л.П. Петров, ЧР профсоюз организацийĕсен пĕрлешĕвĕн председатателĕн çумĕ Г.М. Германова тата ЧР «РОСТО» (ДОСААФ) обществăлла организаци канашĕн ертўçин çумĕ С.Э. Шалагин килсе çитрĕç. Ушкăнсем çине пайланса çула тухиччен вĕсем район пуçлăхĕпе тĕл пулчĕç. Юрий Александрович вĕсене районти социаллă-экономика епле аталанса пынипе тата умра тăракан çивĕч ыйтусемпе паллаштарчĕ. Хыççăн вара ĕçлĕ ушкăнсем палăртнă вырăнсене çула тухрĕç.

Чăваш патшалăх гуманитари институчĕн ăсчахĕ Л.П. Петров, ЧР профсоюз организацийĕсен пĕрлешĕвĕн председатателĕн çумĕ Г.М. Германова тата ЧР «РОСТО» (ДОСААФ) обществăлла организаци канашĕн ертўçин çумĕ С.Э. Шалагин, район пуçлăхĕн çумĕ – культура тата архив ĕçĕсен пайĕн ертўçи А.Е. Андреева, районти профсоюзсен Координаци канашĕн председателĕ Ф.Ф. Григорьева тата районти халăха вĕрентес ĕçĕн профсоюз организацийĕн председателĕ Л.Г. Федорова малтанах Çатракасси ял тăрăхĕнче пулчĕç.

Çатракассинчи вăтам шкулта пулнă чух хăнасем кунти тирпей-илемпе, хăтлă классемпе кăмăллă пулнине палăртрĕç. Сахал тупăшлă тата йывăр лару-тăрулла çемьесенчи ачасене шкул мĕнле пулăшнипе, ачасен апатланăвне еплерех йĕркеленипе, ачасен сывлăхĕпе те интересленчĕ ĕçлĕ ушкăн.

Кашмашри Культура çуртĕнче те пулчĕç хăнасем. «Кунта çынсен культурине çўллĕрех шая çитермелли пур условисем те пур. Ку – чăн-чăн культура çурчĕ», – терĕç вĕсем тĕлĕнсе савăннине пытармасăр.



Малалла çул ушкăна Оринин ял тăрăхне илсе çитерчĕ. Кунта та Шупашкарсем шкулпа паллашма кăмăл турĕç. Шкулта Попечительсен канашĕ аван ĕçлесе пынине пĕр саслăнахkаларĕç, шкулти музей та вĕрентў ĕçĕнче пысăк пулăшу парса пынине палăртрĕç. Оринин шкулне ачасене автобуспа турттарассине йĕркеленĕ. Нумайăшĕ кунта Мулкачкассинчен çўрет. «Кăçал та акă пĕрремĕш класа унтан пилĕк ача килмелле, анчах вĕсем садике çўремен. Ку вара вĕренўре, ачасен хутшăнăвĕсенче те палăрать», – пĕлтерчĕ хăйĕн пăшăрханăвне кăçал пăрремĕшсене йышăнма хатĕрленекен учительница. Çак проблема ку тăрăхри «Золушка» ача садĕнче те палăрчĕ. Кунта «ачасен черечĕ» те пур. Юнашар ялсенчен садике çўрес текенсем уйрăмах чи пĕчĕккисем хушшинче нумай. Ача садне çўреме инçе пулни чăрмав кўрет. «Çавăнпа та ачасене шкул автобусĕпе турттарма май çук-ши?» – çапларах пулчĕ кунта ĕçлекенсене тата ашшĕ-амăшĕсене те, паллах, канăç паман ыйту.

«Оринино» хуçалăхра ĕçлекенсемпе тĕл пулу йĕтем çинче иртрĕ. Ял çыннин пуçне сĕт йўнĕ хакпа пуçтарни самаях ыраттарать. Анчах вăл çаплах ирсерен витре çĕклесе утатьха. Аш-какай парассин хакĕ те питĕ пĕчĕк пулнине пĕлтерчĕç хуçалăх ĕçченĕсем. Çакăнпа пĕрлех тĕрлĕ дотацисене илессин ыйтăвĕсем те çиеле тухрĕç. Калăпăр, темиçе çул хушши (виççĕрен сахал мар) ним тумасăр выртнă çĕрсене сухаласа-акатăн пулсан патшалăх дотаци парса пулăшать. Кашни çул тар юхтарса ĕçлекен çĕрсем çинче ака-суха ирттернĕшĕн вара? Çук...

Кунта ĕçлекенсем : «Ĕç ветеранĕ» хисеплĕ ята илессине Раççей шайĕнче татса пама май çук-ши?» – тесе те ыйтаççĕ.

Пăшăрхантаракан ыйтусем нумай. Вĕсене татса парассине те нумайăн кĕтеççĕ.

**Н. НИКОЛАЕВА.**

**Сăн ўкерчĕкре: тĕл пулу вăхăтĕнче.**

**Автор сăн ўкерчĕкĕ.**

Ырă ĕççен çулталăкĕнче

# Сăваплă палăк çĕкленчĕ

Августăн 19-мĕшĕнче Пан улми спасĕпе пĕрле чăннипех те питĕ пысăк ырă ĕç пулса иртрĕ Ильинкăра. Атăлăн çыранĕ хĕрринче малтан ĕçленĕ чиркў вырăнĕнче мăнаçлă палăк – Пуç таймалли Хĕрес вырнаçтарчĕç. Çак хĕвеллĕ кун çывăхри ялсенче пурăнакан ватă-вĕтĕ – пурте палăртнă вырăна пуçтарăнчĕç. Район пуçлăхĕ Ю.А. Иванов, унăн çумĕ – культурăпа архив ĕçĕсен пайĕн ертўçи А.Е. Андреева, район администрацийĕн капиталлă строительство, архитектура тата пурăнмалли çурт-йĕрпе коммуналлă хуçалăх управленийĕн ертўçи В.Г. Никитин çак ĕçе пурнăçлассишĕн сахал мар тăрăшнă. Ятарлă Хĕресе Шупашкарта хатĕрлесе Муркаш районне çитерчĕç. 2-мĕш округăн благочинĕ Сергий атте, Муркашри кĕлĕ çурчĕн настоятелĕ Федор атте тата Очăкассинчи кĕлĕ çурчĕн настоятелĕ Алексий атте килни вара кĕтнĕ уява сумлă сăн кĕртрĕ.





Хĕресе çирĕплетнĕ çĕрте район администрацийĕн капиталлă строительство, архитектура тата пурăнмалли çурт-йĕрпе коммуналлă хуçалăх управленийĕнче ĕçлекенсем вăй хучĕç. Элĕкрен командировкăна килнĕ экскаваторщик В.П. Кузьмин та пархатарлă ĕçе хутшăнса пирĕн район историне кĕрсе юлчĕ.



Пуç таймалли Хĕресе Сергий атте çутатса çаврăнчĕ. «Малалла вара кунта пуç таймa та , кĕл тума килме те юрать», – терĕ вăл ĕçе вĕçленĕ май. Халлĕхе Ильинкăра чиркў тума тытăннă кăна-ха. Вăл хута каиччен кунта Турра ĕненекенсем килсе çўрессе вара иккĕлентермест: çак сăваплă Хĕрес пĕрре курсах хăй патне туртать, лăпкăлăх парнелет.

Юрий Александрович сăваплă аттесене тав сăмахĕсем каланă май çакăнти таврана кунта пурăнакансем яланах тирпейлĕ тытасса шаннине палăртрĕ. «Çак Хĕрес атăл тăрăх ишекенсемшĕн те паллă, таса вырăн пуласса ĕненес килет», – пĕлтерчĕ вăл хăйĕн шухăшне. Унпа килĕшни вара пурин куçĕнче те палăрчĕ. Тен, пурăна киле, мăшăрланакансем те çак палăк умне килсе пуççене тайса чечек çыххисем хурассине йăлана кĕртĕç...

Кинемейсем илсе пынă пан улмисене те çутатрĕ Сергий атте. Вĕсемпе вара кунта пурне те тараватх хăналарĕç. Вăтăсем Хĕресе вырнаçтарнăшăн чĕререн тухакан тав сăмахĕсем каларĕç. Пурте пĕрле асăнмалăх сăн ўкерĕнсе ырă та таса чунсемпе тĕтăшах çак вырăна килсе çўрессине шантарчĕç.

**Н. НИКОЛАЕВА**

**Сăн ўкерчĕксенче: район пуçлăхĕн сăваплă аттесемпе сўтсе явмалли ыйтусем яланах пур; кĕлĕ вăхăтĕнче; В.И. Кожанов депутат чиркў тăвас ĕç епле пынипе паллаштарать.**

**Автор сăн ўкерчĕкĕсем.**

Вулакан пултарулăхĕ

# Чĕре юрри

Хирти сар тулă хушшинчи  
Кăвак чечек сан куçусем.  
Ирхи çут сывлăм шыв пĕрчи  
Калас çепĕç сăмахусем.

Ăçта-ши çавă сăмахсем,  
Йăваш хĕре тен илĕртеç?  
Ăçта-ши халĕ çав сăнсем,  
Хĕрў чунне-ши тыткăнлаç?

Чĕре юрри – хĕвел ăшши  
Тен пулчĕ маншăн асăмра?  
Хитре куллу, эс чуп туни  
Тен юлчĕç тарăн суранра?

Кам çутнă тĕпсĕр тўпере  
Сўнми мерчен ик çăлтăрне?  
Кам манмĕ, упрĕ чĕрере  
Ĕçпе маттур ыр пикене?

**Тамара МИХАЙЛОВА.**

Ваçкасси ялĕ.

Пĕрремĕш чăваш сăмахлăхĕн антологине – 155 çул

# *Халĕ те пĕлтерĕшне çухатмасть*

2008 çулта пĕрремĕш чăваш сăмахлăхĕн антологийĕ – «Чăвашсен калаçăвĕсемпе юмахĕсем» пичетленсе тухнăранпа 155 çул çитет. Унăн авторĕ тата ăна хатĕрлекенĕ – пĕрремĕш чăваш писателĕ, ученăй-историкĕ, этнографĕ, фольклорисчĕ, куçаруçи, Юнкăпуç ялĕнче çуралса ўснĕ Спиридон Михайлович Михайлов.

«Чăвашсен калаçăвĕсемпе юмахĕсем» кĕнеке виçĕ тĕп пайран тăрать. Пĕрремĕш пая С.М. Михайлов çырнă «Чăвашсен этнографине кĕскен çырса кăтартни» очерк, иккĕмĕшне – чăваш фольклорĕн тĕсĕсем, виççĕмĕшне – литература произведенийĕсен оригинал тексчĕсем кĕнĕ.

«Чăвашсен калаçăвĕсемпе юмахĕсем» очерк тĕпрен илсен чăваш хресченĕн пурлăхпа ăс-хакăл культури пирки. Унта хресченсен çурт-йĕрĕ, апат-çимĕçĕ, çурт-йĕр тата хуçалăх енĕпе мĕн ĕçлени, вĕсен çи-пуçĕпе минтер таврашĕ, ачасене килте воспитани пани, уявсем, ача вăййисемпе теттесем, çĕр ĕçлемелли хатĕрсем, тырă тата утă пухса кĕртни, вырăх-чĕрлĕхпе кайăк-кĕшĕке пăхса усрани, кунпа пĕрлех хăш-пĕр тĕшмĕшлĕхсем пирки çырса кăтартнă. Чăваш çемйисенче ачасене ĕç воспитанийĕ парасси пирки автор çапла çырнă: «Çемьере хĕр ачасем çук пулсан вĕсем вырăнне арçын ачасем ĕçлеççĕ: 7–10 çулхисем амăшĕсене арлама пулăшаççĕ. Ку ал ĕçне юлашки çул эпĕ те пурнăçланă. Атте-анне килĕнчен кайма тиврĕ. Кĕрхи кунсенче 9 çăмха хатĕрлерĕм... 10 çултан тытăнса чăвашсен арçын ачисем çăпата çыхма тата сўрелеме, 14–15 çулсенче сухалама тухма та тытăнаççĕ... 12 çула çитнĕ хĕр ачасем амăшĕсене ал ĕçĕнче пулăшаççĕ, кĕпесен çухисене тĕрлесе хитрелетеççĕ, 15 çултан тытăнса пир тĕртме тытăнаççĕ...».

Антологин иккĕмĕш – фольклор пайне – ун чухнехи сумлă халăх юррисем кĕнĕ. Вĕсем «Чим-чим кăсăя!», «Айта инке вăрмана...», чăваш ачисен юрри «Айтăр каяр çырлана...», çĕнĕ çăкăра халалланă хăна юррисем пиллĕк. Вĕсем хушшинче хальхи чăваш юррисен унччехи варианчĕсем те пур. Сăмахран, «Алран кайми аки-сухи». Юрăсемсĕр пуçне кунта ваттисен сăмахĕсемпе тĕшмĕшле паллăсем те, тупмалли юмахсемпе шўт-хайлавсем те, юмахсем те пур.

Виççĕмĕш пайра – чăвашсен илемлĕ литературин хăйне евĕр 6 очеркĕ. Вĕсене икĕ е виçĕ çын калаçăвĕ евĕр çырнă. Вĕсен шутĕнче «Анатри чăвашпа вирьял чăвашĕн калаçăвĕ», «Потран пасарне кайма пуçтарăнни», «Фрол мучи Пугачев çинчен калани» т. ыт. те.

«Чăвашсен калаçăвĕсемпе юмахĕсем» чăннипех те С.М. Михайлова Раççейĕн тата Хĕвел Анăç Европăн ученăйсен тĕнчинче тивĕçлĕ хисеппе паллă кўнĕ. Унпа вырăссем те, нимĕçсем те, венгрсем те, финсем те анлă усă курнă». Çапла хак панă этнографăн ĕçне Раççей журналисчĕсен союзĕн членĕ А. Алексеев. (А. Алексеев. «У истоков первой чувашской антологии». «Советская Чувашия».–1999.– Январĕн 13-мĕшĕ).

Спиридон Михайлович Михайловăн наукăпа тĕпчев ĕçĕсем Чăваш Республикин патшалăх пичет архивĕнче ăнăçлă упранаççĕ. Тĕпчевçĕсем, таврапĕлўçĕсем, этнографсем, Атăл тăрăхĕнчи халăхсен ăс-хакăлпа культура аталанăвĕпе интересленекенсем ученăй ĕçĕсемпе паллашма пăрахмаççĕ.

Унăн пурнăçĕпе ĕçĕ-хĕлĕ пирки В.Д. Димитриев, Д.Е. Егоров, М.Я. Сироткин, В.Г. Родионов профессорсем, В.Д. Данилов, А.П. Данилов, И.Я. Тенюшев тата ытти историксемпе публицистсем сахал мар çырнă. Спиридон Михайлович хайлавĕсене 1972 çулта «Вырăс, чăваш тата çармăс халăхĕсен историйĕн этнографи ĕçĕсем» кĕнекере тата 2004 çулта «Сочиненисен пуххинче» пичетлесе кăларнă.

**Е. АРЛАНОВА,**
**Чăваш Республикин патшалăх пичет архивĕн документсене пичетлес тата вĕсемпе усă курас енĕпе ĕçлекен пайĕн пуçлăхĕ.**

Шырав пырать

# Тупма пулăшăр!



Чăваш Республикин Муркаш районĕпе ĕçлекен шалти ĕççен пайĕ район çыннисенчен пулăшу кĕтет. Кăçалхи çу уйăхĕн 16-мĕшĕнче Оринин ял тăрăхĕнчи Пăсăрман ялĕнче Центральнăй урамри 16-мĕш çуртра пурăнакан Вениамин Ильич Вязов çухалнă. Вăл, 1960 çулхи сентябрĕн 27-мĕшĕнче çуралнăскер, психика енчен чирлĕ пулни паллă. Çак арçын çу уйăхĕн 16-мĕшĕнче килтен паллă мар еннелле тухса кайнă та паянччченех каялла таврăнман. Арçын 175 см çўллĕш, кĕрнек кĕлеткеллĕ, çавра питлĕ, тĕксĕм куçлă, тĕксĕм вăрăм çўçлĕ, вăхăт иртнĕ май сухалланма пултарнă.

Уйрăм паллăсем çук. Утнă чух саркаланса та курпун кăларса утать, пустуй калаçмасть, вăтанчăк, чăвашла кăна пуплет, час-часах çĕр çине сурать.

Çакăн пек çынна куракансене тата вăл ăçтине пĕлекенсене шалти ĕççен пайне пĕлтерме ыйтатпăр. Тел.: 2-16-67 е 02.